# КУНТА САККУНШĂН ТĂРĂШАÇÇĔ ТАТА ХАЛĂХШĂН

## *Районти шалти ĕçсен пайĕнче иртгернĕ пĕр дежурствăран*

**Ятарлă кăларăм**

*«Инçетри йĕп вĕçне куракан ура айĕнчи пĕренене асăрхамасть», – тет ваттисен сăмахĕ. Çак тĕрĕслĕх кулленхи пурнăçра хамăртан ытларахăшне пырса тивни пирки те манмалли çук пирĕн. Паян Раççей мал утăмлă утнине тата Раççей Федерацийĕн Правительстви çĕр-шывра пурăнакансене пулăшас тĕллевпе туса иртгерекен ĕçсене пирĕнтен кашниех курса хăйне май хак парать. Анчах çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртессипе эпир хамăртан килнине пĕтĕмпех тăватпăр-и-ха? Ку ыйту çине вара пĕр енлĕ хурав çук. Çакна йĕрке хуралçисен ĕçĕпе çывăхарах паллашсан уççăнрах курма пулать. Вулавçăсене интереслентерме кирлĕ çак ыйтупах августăн 27-мĕшĕнчен 28-мĕшне килекен талăка эпĕ шалти ĕçсен пайĕнче дежурствăра иртгертĕм. Мĕнле пурăнать-ха паянхи милици? Пирĕн канăçлăха тивĕçлипех сыхлама хатĕр-и вăл? Хамăр канăçлăх çине эпир хамăр епле витĕм кӳретпĕр-ха? Ку ыйтусем çине пулакан хуравсене аяларах пичетленекен статьясенче тупма пултаратăр. Пĕтĕмлетĕвне вара хăвăр тăвăр.*

## Ĕçлекеншĕн канлĕх çук

6 сехет те 40 минут. Çумăрлă çанталăка пăхмасăрах Муркаш хушшинче ĕçе каякансем утма пуçларĕç. Кашнин хăйĕн ĕç тĕллевĕсем. Çакнашкал малтуртăмлă шухăшпах районти шалти ĕçсен пайне пай пуçлăхĕ Евгений Дмитриевич Макаров пырса çитрĕ. Иртнĕ талăкри дежурство пирки оперативнăй дежурнăй пулнă И. Петров ăнлантарса панине итлесен тата районти пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллашсан, çĕнĕ дежурствăна килсе çитнĕ Валерий Петрович Леонтьев хăй ĕçе пуçăнма хатĕррине пĕлтерсен, милици подполковникĕ Е. Макаров ĕç пӳлĕмне иртрĕ. Йĕрке хуралçисен черетлĕ ĕç кунĕ пуçăнать. Мĕн çĕннине илсе килĕ вăл? Хальлĕхе ун çине хурав çук-ха.

**Шалти ĕçсен пайĕнче 1993 çултанпа ĕçлекен, юлашки 8 çулне дежурнăй пайра вăй хуракан Валерий Петрович Леонтьев оперативлă дежурнăй иртнĕ талăкри ĕçсем пирки районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне Е. Макарова каласа парать.**

**8 сехет те 45 минут.** Ĕç кунĕ ырă хыпартан пуçланчĕ. Йĕрке хуралçисен оперативлă ĕçĕсене пула июлĕн 20-мĕшĕнче 17-мĕш сехетре ачасен Шомикре вырнаçнă «Березка» сывату лагерĕнче çухалнă кĕсье телефонĕ тупăнчĕ. Вожатăй пӳлĕмĕнчен йăкăртнă телефон лагере канма килнĕ Шупашкар каччин М. Кашин аллинче сас панă.

**9 сехет те 10 минут.** Мускав – Ĕпхӳ автоçул çинче Рыккакасси ялĕ тĕлĕнче «Юрусов» индивидуаллă предприниматель патĕнче водительте ĕçлекен Александр Галкин «ГАЗ-33022» автомашинăпа пынă чух çул-йĕр правилисене пăхăнманнипе малта пыракан КамАЗ-53212 автомашинăна пырса çапăнать. А. Галкинпа пĕрле пулнă икĕ пассажир тĕрлĕ сурансемпе Мăн Сĕнтĕр больницине лекеççĕ.

**9 сехет те 50 минут.** Шалти ĕçсен пайне ĕнер, августăн 26-мĕшĕнче, 19-мĕш сехетре шкул автобусĕпе инкек пулни пирки пĕлтерӳ çитрĕ. Вырăна çийĕнчех шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Макаров, общественлла хăрушсăрлăх милицийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан В. Максимов, çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан А. Щербаковпа çак уйрăмăн пропаганда инспекторĕ С. Иванов, ДПС инспекторĕ Ю. Васильев тухрĕç. Çакă паллă, малтанхи палăртусемпе автобусăн тормоз системи юсавсăр пулнă. Асăннă сăлтавпа автобус çул хĕрринче ларакан асфальт саракан машинăна пырса çапăннă. Асфальт саракан техника автобуса йĕри-тавра хӳтлĕх карти тытман газ валеçекен пункт çине кĕрсе каясран чарнă.

**Кăнтăр вăхăтĕнче** шалти ĕçсен пайне Çĕньял Очăкассинче пурăнакан Е. Смирнова ЧР Президенчĕ патне çырнă çыру çаврăнса çитрĕ. Тивĕçлĕ хурава шутлă кунсенче памалла.

**18 сехет те 10 минут.** Вăрманкассинче пурăнакан 26 çулхи М. Григорьева хăйĕн мăшăрĕ пулнă А. Егорова (1972 çулта çуралнă) 14 сехет тĕлĕнче район администрацийĕн коридорĕнче хирĕçӳ пуçланăшăн административлă майпа явап тыттарма ыйтать.

**22 сехет те 40 минут.** «Шырав» ушкăн 1964 çулта çуралнă Автанкассинче пурăнакан Р. Белована тытса чарать. Çак гражданка августăн 26-мĕшĕнче 17-мĕш сехетре ирĕклĕ майпа хăйсен ялĕнчи 82 çулхи В. Скворцова килне кĕрсе вăрттăн майпа сунтăкран 22 пин тенкĕ укçа илсе тухса кайнă.

Ытти вăхăт çак кун йĕркеллĕ иртрĕ. Йĕрке хуралçисем унчченхи йĕркесĕрлĕхсене уçса парассипе ĕçлерĕç те вĕсен ларса канма та вăхăт пулмарĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Пăшал ача вăййи мар**

## Асăрханулларах пулмалла

Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен. Çак чăнлăха харпăрлăхра сунар тата газ пăшалĕсем тытакансем пирки те калама пулать. Ырă шухăшĕмĕтпех кирлĕ вăхăтра пăшал туяннинă граждансем пĕртак вăхăт иртсен темшĕн-çке хăйсен унччен тĕллевĕсем пирки манса пăшалпа хăйсене «чăн-чăн хуçасем пек» тытма пуçлаççĕ, час-часах общественлла йĕркене пăсаççĕ, саккунпа хирĕç тăрăва кĕрсе каяççĕ. Юлашки сăмахсене Шомик ялĕнче пурăнакан И. Хохлов пиркиех темелле. Эрех ĕçсен çак сунарçă хăйĕн харпăрлăхĕнчи икĕ кĕпçеллĕ ТОЗ-БМ пăшала аларан вĕçертмен. Кайран вара ăçта тăратнине те маннă. Августăн 21-мĕшĕнче черетлĕ тĕрĕслевпе çитсен кил хуçи пăшала вăл упранмалли сейфран кăларса параймарĕ. Ăçта пăшал? Калаçупа тĕпчев ĕçĕсем иртгерсен пăшала арăмĕ илсе тухса пачĕ. Вăл мăшăрĕнчен пытарса хунă иккен. И. Хохлов пăшала тивĕçлĕ çĕрте тытайманран халĕ унран сунар пăшалне туртса илес ыйту тăрать. Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре пулмалла-çке.

Сунар тата газ пăшалĕсем пирки сăмах пуçарнăран çакна каласа хăвармалла: хальхи вăхăтра вĕсем районта пурăнакан 369 çын харпăрлăхĕнче 440 единица. Пăшалпа усă курас йĕркене пăснăшăн кăçал çулталăк пуçланнăранпа 28 çынна административлă майпа айăпласа вĕсенчен 28 пăшал туртса илтĕмĕр.

Харпăрлăхра пăшал тытакансем вĕсемпе асăрханулла пуласса шанмалли çеç юлать.

**Т. ТЕРЕНТЬЕВА,**
**граждансене пăшалпа усă курма ирĕк паракан тата вĕсене тĕрĕслесе тăракан инспектор.**

**Следстви пайĕнчен**

## Тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тумасан

Нумаях пулмасть район сучĕ Лап Олкашра пурăнакан, 2005 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнчи айăплавпа 2 çул та пĕр уйăхлăха ирĕкрен хăтарнă 44 çулхи В. Н. Ивановские тепĕр хут судпа айăпларĕ. Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ха вăй питти арçын? Вăтам пĕлӳ илнĕ, авланса çемье çавăрайман арçын тĕрмене хăйĕн иккĕмĕш килĕ теме пуçланă курăнать. Висĕ кун маларах ирĕке тухнă арçын 2007 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче Лап Олкаш урамĕпе пынă çĕртех шăрпăк курупкинче спорт пистолечĕ валли производство мелĕпе хатĕрленĕ 5 патрон тупать. Вĕсене киле илсе килсе саккуна пăсса пытарса 2008 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче йĕрке хуралçисем иртгернĕ тĕрĕслевре тупăниччен упрать.

В. Ивановскиех 2008 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнче 7 сехет тĕлĕнче алăка çĕмĕрсе Мăн Сĕнтĕрти Ленин урамĕнчи М. Тимофеев хваттерне кĕрет, анчах нимĕн те вăрламалли çукран унтан пушшăнах тухать. Унтан тепĕр хваттере кĕрсе тимĕр краватĕн тимĕр платформине илсе тухать, кил хуçине 2000 тенкĕлĕх тăкак кӳрет.

В. Ивановскиех 2008 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнче 12 сехет тĕлĕнче Мăн Сĕнтĕрти А. Васильев хваттерне кĕрсе 400 тенкĕлĕх утиял, 250 тенкĕлĕх покрывало, 400 тенкĕлĕх джинс брюки, 300 тенкĕлĕх куртка, 100 тенкĕлĕх видеокассета, 5000 тенкĕлĕх фотоаппарат, 100 тенкĕлĕх ачан шкул сумккине, кăмакан 400 тенкĕ тăракан тимĕр алăкне, краватĕн 2000 тенкĕ тăракан тимĕр платформине илсе тухать. Пурĕ 8950 тенкĕлĕх.

Тепĕр сехет çурăран çын пурлăхĕпе пуйма шутланă арçын Лап Олкашри М. Тимофеев сарайне алăк çĕмĕрсе кĕрсе 15 метр алюмини пралук вăрласа тухать, кил хуçине 495 тенкĕлĕх тăкак тăвать.

Çакнашкал «хастарлăхшăн» район сучĕ В. Ивановские 3 çул та 8 уйăхлăх ирĕкрен хăтарма приговор йышăнчĕ. Вĕренĕн, темĕн чухлĕ явăнсан та, вĕçĕ пулатех çав.

**Н. ПЕТРОВ,**
**шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн следователĕ.**

**Шалти ĕçсен пайĕн штаб историйĕ**

## Ĕç йĕркелĕвĕ штабран пуçланать

Октябрĕн 7-мĕшĕнче Раççей Шалти ĕçсен министерствин тытăмĕнче штаб подразделенийĕсем йĕркеленĕренпе 90 çул çитет. Çар, милици е чрезвычайлă лару-тăру системинче пулнă çын штаб мĕнле вырăн йышăннине каламасăрах ăнланать. Пĕтĕмĕшле ĕçсен йĕркелĕвĕ пуçланать те кунтан.

1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче Муркаш районĕ йĕркеленсен февралĕн 22-мĕшĕнче шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн районти пайĕ ĕçлеме пуçлать.

Районти милицин штабĕ 1993 çулта уçăлать. Пĕрремĕш штаб пуçлăхĕ эсир сăн ӳкерчĕкре куракан, анчах пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă Владимир Леонидович Сазонов пулнă. Хăйĕн ырă тĕслĕхĕпе тата ĕç çине пысăк ответлăхпа пăхнипе вăл ĕçри юлташĕсем умĕнче ырă ятлă пулнă, тĕслĕх шутланнă. 4 çул иртсен унăн вырăнне милици майорне М. Костина лартнă. 2001 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 4 çул штаба Виталий Алексеевич Григорьев ертсе пынă. Паян вăл шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ тата общественлла хăрушсăрлăх милицийĕн ертӳçи. Ун хыççăн 5 çул штаб пуçлăхĕ пулса Андрей Кронидович Сретинский вăй хунă. Паян вăл экономика преступленийĕсемпе кĕрешекен оперуполномоченнăй.



Хальхи вăхăтра районти шалти ĕçсен пайĕн штабне Раççей ШĔМ-ĕн нумай медалĕсемпе кăкăр çине çакмалли паллисене тивĕç пулнă Валерий Геннадьевич Яковлев ертсе пырать. Çурçĕр Кавказри йĕркесĕрлĕхе пĕтерме хутшăннăшăн ăна РФ шалти ĕçсен министрĕн приказĕпе Хисеп грамотипе наградăланă.

В. Яковлевпа пĕрле паян штабри ĕçсене вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлассипе анализ, план тата тĕрĕслев инспекторĕ Н. Николаева, учетпа регистраци дисциплинин инспекторĕ А. Кириллова вăй хураççĕ. Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн вĕсем ĕçри коллегăсем хушшинче те, ЧР Шалти ĕçсен министерствинче те ырă ята тивĕçнĕ.

**В. ЯКОВЛЕВ,**
**штаб пуçлăхĕ.**

## Ачасем çине тимлĕх уйăрасчĕ

Хамăр ачамăрсенче пуласлăхăмăра куратпăр пулсан, вĕсене тĕрĕс воспитани парса çитĕнтересси те ӳссе çитнĕ кашни çыннăн тĕп тĕллевĕ пулмалла. Ахальлĕн çапма пĕлмен пушă хамăра лекнĕ пекех пулса тухмасть-и-ха? Урăхла пулаймасть те. Çак калаçу çинче тишкерсе пăхар-ха районти çул çитмен ачасем общественлла йĕркене пăснине. Кунта савăнмалли нимĕн те çук. Паллах, иртнĕ çулхи çак тапхăрпа танлаштарса пăхсан, çул çитмен çамрăксем тунă преступленисен хисепĕ те, вĕсене тăвакансем те сахалланнă. Анчах манма кирлĕ мар, пирĕн хушăмăрта пĕр ача преступлени тусан та çак тĕслĕх пирĕн обществу сывах маррине кăтартать. Обществăна сыватасси вара – пĕрлехи ĕç. Ку вăл – пирĕн ыранхи канлĕ пурнăç. Хальлĕхе эпир çав лăпкăлăх çине шанса пăхаймастпăр-ха.

Кăçалхи 7 уйăхра район территорийĕнче ачасемпе çул çитмен çамрăксем 14-ăн 11 преступлени турĕç. Пĕлтĕрхи кăтарту: ачасемпе çул çитмен 29 çамрăк 42 преступлени тунăччĕ. Тепĕр хут калатăп, преступленисем сахалланнă пулин те, вĕсем пирĕн хушăмăрта пур-ха.

9.08.08. Москакасси ял тăрăхĕнчи Хачăк сали ялĕ. Çул çитмен икĕ çамрăк пĕрисенне пахчара ларакан çăмăл автомашинăран çĕрле мотоцикл валли 17 литр бензин илсе каяççĕ тата «ĕç усăллăрах» пултăр тесе машина çинчи инструментсен ещĕкне «уралантараççĕ».

10.08.08. Çак çамрăксемех асăннă ялтах малтан калаçса татăлса хуçи урамра хăварнă ВАЗ-2120 автомашинăран мотоциклпа чупма çур çĕр тĕлĕнче 15 литр бензин «йăкăртса» каяççĕ.

21.08.08. Мотоцикл ыйтăвĕ çивĕч тăни Тренккăра та палăрать. Çул çитмен пĕр çамрăк сарайĕнчи бензин канистрне, унччен рехех куç хывнăскер, çак каç вăшт! кăна илсе тухса каять.

26.08.08. 18 çултан аслăрах пĕр «паттăрпа» çул çитмен пĕр çамрăк çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса Çĕньял Орининта автомашина аккумуляторне «хватить» тăваççĕ.

Халĕ вĕсен пурин те саккун умне тăма тивет.

**М. КОНУЗИНА, çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен инспектор.**

## Йĕрке хуралĕнче малти ретре

Милицин патрульпе пост службине (малалла ППСМ) йĕркеленĕ кун 1923 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕ шутланать. 1926 çулхи çу кунĕсем тĕлне ППСМ подразделенийĕсем пур регионсенче те йĕркеленсе вăй илнĕ. Паян та вăл чи пысăк йышлă служба. ППС милиционерĕсем Раççейре кунсерен преступлени тунă 200 пине яхăн çынна тытса чараççĕ тата 8 миллиона яхăн тĕслĕхре административлă право йĕркине пăсасран асăрхаттараççĕ.

ППСМ служби юлашки кунсемччен аталанса пычĕ. Çак службăн районти çуралнă кунĕ – 1995 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ. Вĕсем паян талăкĕпех çанталăк условийĕсене пăхмасăр обществăри йĕркелĕхе сыхлаççĕ, урамсенче тата халăх йышлă пухăнакан вырăнсенче профилактикăн пысăк ĕçне туса иртгереççĕ. Вĕсен тĕп тĕллевĕ – йĕркелĕхе сыхласси.

Районти ППСМ сотрудникĕсем Чечен Республикинчи служба командировкисенче те хăйсене ырă енчен çеç кăтартрĕç: В. Семенов, В. Яртеев, Н. Кудряшов, Ю. Селюшкин, В. Бирюков тата ыттисем те медальсемпе ытти хавхалантару паллисене тивĕçрĕç. Георгий Порфирьев аслă сержант вара 2007 çулта республикăри професси конкурсĕнче «Професси енчен чи лайăххи» номинацире 3-мĕш вырăн йышăнчĕ.

– Обществăри йĕркелĕх – пирĕн тĕп тивĕç, – тесе кунсерен службăна тухаççĕ районти ППС милиционерĕсем.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ППС милиционерĕсем Г. Порфирьевпа И. Кульженков халăхпа кăмăллă ĕçлеççĕ.**